26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 МАРТ 14 ВЫРСАРНИКУН 58(6295) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Районри хаçатсем çуракине хатĕрленсе ирттерес ĕçре

Вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш çуракине ăнăçлăн хатĕрленсе ирттерес ĕçре районри хаçатсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Вĕсен халăха вăхăтра мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене акана ăнăçлăн хатĕрленсе ирттерес ĕçе мобилизацилес-сишĕн тăрăшмалла.

Районри хаçатсен работникĕсен чылайĕшĕсем хăйсен тĕп задачисене ăнланаççĕ. Вĕсем хăйсен ĕçне, хăйсен хаçачĕсен сассине вăйлăлатма тăрăшаççĕ. Анчах хаçатсен ĕçĕ çине пĕтĕмĕшлĕн мар, уйрăмшерĕн илсе пăхсан, вĕсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пурри курăнать.

Районсенчи хаçатсен çитменлĕхĕсенчен пĕри вăл — пĕр тытăннă ĕçе, çĕнĕ пуçарăва вĕçне çитиччен туса пыманни пулса тăрать.

Вăрмар районĕнчи «Хĕрлĕ Ялав» хаçат (редакторĕ И. Степанов) хăйĕн пĕрремĕш номерĕнче Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн «Вырăнти удобренисене пухса хатĕрлес тĕлĕшпе уйăхлăх ирттересси çинчен» йышăннă постановленине пичетлесе кăларнă та урăх вара кун çинчен январĕн 16-мĕшне çитиччен кимĕн те шарламан. Çав кунхи номерĕ хаçат «Трактор» колхозăн председателĕ Николаев юлташа «вăл уйăхлăхан тĕллевне ăнланман, ун çинчен колхозниксене ăнлантарса паман» тесе ятлать. Анчах ку сăмахсем никама та мар, чи малтан хаçата хăйне пырса тивеççĕ. Хаçат уйăхлăхан тĕллевне хăй те ăнланман, колхозниксене те ăнлантарса пама тăрăшман. Кун пек тĕслĕхсене ытти хăшпĕр райхаçатсенче те тупма пулать.

Районри пур хаçатсем те хăйсен районĕсем социализмлă ăмăртăва тухса илнĕ обязательствăсене, пирĕн республика Мари республикипе социализмлă ăмăртăва тухса илнĕ обязательствăсене пичетлесе кăларнă. Анчах çав обязательствăсене пурнăçа кĕртме хаçатсем колхозниксемпе колхозницăсене пачах та çителĕксĕр мобилизацилесе пыраççĕ. Районри хаçатсенчен хăшĕ-пĕрисем обязательствăсене пичетлесен пĕтĕмпех лăпланса ларнă.

Районри хаçатсен задачи — районра район, колхозра колхоз, бригадăпа бригада хушшинчи ăмăртăва куллен çутатса пырасси пулса тăрать. Хаçатра ăмăртакансен трибуни кĕтессе тусан та питĕ аван. Кунта кашни хаçатăн хăйĕн формине тупмалла, ăмăрту мĕнле пыни çинчен кашни номертех çырмалла.

Районри хаçатсен страницисем çинче çуракин конкретнăй ыйтăвĕсем тĕп вырăн йышăнма тивеçлĕ. Анчах паянхи куна çитсе те хăшпĕр райхаçатсем колхозсенче вăрлăхсемпе туртăм вăйĕсене, машинăсемпе инвентарьсене, урапасемпе ут таврашĕсене мĕнле хатĕрлени çинчен шарламасăр лараççĕ.

Çавăн пекех райхаçатсем МТС-сен ĕçĕсемпе çителĕксĕр интересленеççĕ. Çак çитменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе Тăвай районĕнчи «Большевикла колхозшăн» хаçатран (редакторĕ Каховский юлташ) вĕренме пулать. Хаçат МТС-па, унти специалистсемпе тачă çыхăну тытать, МТС-а хăйĕн задачисене пурнăçа кĕртме пулăшать.

Чылай райхаçатсенче ялхуçалăх специалисчĕсен, колхоз председателĕсемпе бригадирĕсен, опытлă колхозниксен статьисене курма çук.

Хаçат критикăпа самокритикăн çивчĕ хĕçпăшалĕ пулса тăма тивеçлĕ. Чылай райхаçатсем ĕçри çитменлĕхсене хăюсăр критиклаççĕ. Кунта Комсомольски районĕн «Октябрь ялавĕ» хаçат (редакторĕ В. Андреев юлташ) ыттисенчен лайăх енĕпе палăрса тăрать. Вăл хăйĕн страници çинче «Хĕскĕчпе» ятлă кĕтес тунă. Çав «Хĕскĕч» вара япăх ĕçлекен çынсене чылайĕшне тăрă шыв çине кăларать. Паллах, кунта кашни хаçатăн хăйне уйрăм форма тупма тăрăшмалла.

Кашни хаçат тавра корреспондентсен йышлă çарне пухмалла. Çавăнпа та ялкорсемпе ĕçлессине, колхозсенчи, бригадăсенчи стена хаçачĕсене ертсе пырассине вăйлатмалла. Кашни колхозрах, кашни бригадăрах шанчăклă ялкор тупмалла, ăна ĕçре куллен пулăшса пырас пулать.

Партин хăшпĕр райкомĕсем хăйсен хаçачĕсемпе çителĕксĕр интересленнине ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ пĕрре кăна мар сивленĕ. Çакă вăл пирĕн республикăри хăшпĕр райкомсене халĕ те пырса тивет.

Партин районри организацийĕсен хăйсен хаçачĕсене массăсен чăн-чăн организаторĕсем тăвассишĕн тăрăшмалла.

Çуракине хатĕрленес ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçленĕшĕн, ВКП(б) Вăрнар райкомĕпе ĕççынни депутачĕсен райсовет исполкомĕ тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

1. **Ленин орденлĕ, Сталин ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **А. Д. Васянин**, пуçламĕш парторганизаци секретарĕ **Елизаров**, агрономĕ **Ерлакова**). Колхоз пур культурăсен вăрлăхĕсене те хатĕрлесе хунă. Вĕсене тасатса акмалли кондицие çитернĕ. Хире 6.350 лав тислĕк кăларнă. Минераллă тата ытти вырăнти удобренисем хатĕрлесе хунă. Ялхуçалăх инвентарĕсемпе транспорт инвентарĕсене: плугсене, сеялкăсене хăмăтсене, урапасене, сӳресене тата ыттисене те пĕтĕмпех юсаса, çурхи ĕçсем валли хатĕрлесе лартнă. Махорка тата пахча-çимĕç ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен бригадăсем калча ӳстерме парниксем хатĕрлеççĕ. Колхозри пур бригадăсенче те халĕ колхозниксемпе колхозницăсем агротехникăна вăйлăн вĕренеççĕ, колхозницăсем сеялкăсемпе, плугсемпе тата ытти ялхуçалăх машинисемпе ĕçлеме вĕренеççĕ.

2. **Уравăш ялсоветĕнчи «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз** (колхоз председателĕ **Я. В. Васильев**, комсомолăн пуçламĕш организацин секретарĕ **Волков**). Колхоз пур тĕрлĕ культурăсен вăрлăхĕсене те пĕтĕмĕшпех хатĕрлесе хунă, вĕсене акмалли кондицие çитернĕ, ялхуçалăх машинисемпе инвентарĕсене пурне те юсанă. Хире 2.000 лав тислĕк, 5.100 лав юшкăн, 80 центнер фосфор çăнăхĕ кăларнă.

3. **Мамалай ялсоветĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз** (Колхоз председателĕ Тихонов, комсомолăн пуçламĕш организацин секретарĕ **Скворцова**). Колхоз вăрлăхсене кирлĕ чухлех хывса хăварнă тата вĕсене акмалли кондицие çитернĕ. Плугсене, сӳресене, сеялкăсене хатĕрленĕ, кашни ĕçлекен лаша валлиех хăмăт-ĕнерчĕксем хатĕрлесе хунă. Хире 4.450 лав тислĕк кăларнă, кĕл тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрленĕ.

4. **Волонтер ялсоветĕнчи «Волонтер» колхоз** (колхоз председателĕ К **Ефремов**, пуçламĕш организацин секретарĕ **Павлова**). Колхоз пур культурăсен вăрлăхĕсене те пĕтĕмпех хатĕрлесе хунă тата вĕсене кондицие çитернĕ. Ялхуçалăх машинисемпе инвентарĕсене пурне те юсаса лартнă.6 ĕнепе văкăра кӳлсе çӳреме вĕрентнĕ.

МАЙ УЯВĔ УМĔНХИ СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТУ

Ăмăртура çĕнтерне коллектив

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕпе пĕр Халăх Комиссариачĕ заводсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи февраль уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă. Вĕсем Бунин юлташ директор заместителĕ пулса тăракан завод ăмăртура пĕрремĕш вырăн йышăннине палăртнă тата ăна çав Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне памалла тунă.

Февраль уйăхĕнчи плана пĕтĕм коллектив мĕнпур вăя хурса, çине тăрса ĕçленипе пурнăçланă. Завод работникĕсем умри йывăрлăхсене хăюллăн çĕнтерчĕç, февральти плана 130,5 процент пурнăçларĕç.

Куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялава илнĕ ятпа мартăн 11-мĕшĕнче заводăн чылай цехĕсемпе отделĕсенче рабочисен митингĕсем пулса иртнĕ. Çав митингсенче тухса каланă рабочисемпе служащисем завод коллективне малалла тата лайăхрах ĕçлеме чĕннĕ. Цехсем, отделсем тата уйрăм рабочисем хăйсем çине çĕнĕ обязательствăсем илнĕ.

Пĕр цехра митинг питех те пысăк çĕкленӳпе иртнĕ. Цех мастерĕ Нерубенко юлташ митингра сăмах тухса каланă:

— Пирĕн заводăн ĕçне ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариачĕ пысăккăн хакларĕç. Çак пысăк награда пире продукцие тата ытларах кăларма хавхалантарать. Эпĕ заводри мĕнпур рабочисене малашне тата тухăçлăрах, вăхăта-мĕне, йывăрлăхсене шута илмесĕр ĕçлеме чĕнетĕп. Çапла тусан çеç эпир Хĕрлĕ ялава хамăр алăра тытса тăма пултаратпăр.

Цех коллективĕ çĕнĕ обязательствăсем илнĕ: кулленхи задание кашни рабочипе работницăн 125 процентран кая мар тултармалла, пĕр Халăх Комиссариачĕн заказне мартăн 20-мĕшĕ тĕлне —10 кун маларах тултармалла.

Заводра пулса иртнĕ митингсенче рабочисемпе работницăсем Май уявĕ умĕнхи социализмă ăмăртăва татах та анлăн сарса яма, илнĕ обязательствăсене пурнăçлассишĕн çине тăрса кĕрешме пулчĕç.

Куллен кирлĕ таварсене ытларах туса кăларассишĕн

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XIII-мĕш пленумĕн решенийĕсене сӳтсе-явнă хыççăн «Стрела» артелĕн членĕсем хăйсем çине çĕнĕ обязательствăсем илнĕччĕ. Илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçлассишĕн социализмлă ăмăрту пуçланчĕ. Артельри стахановкăсем В. Архипова, Ф. Сергеева, Н. Викторова, М. Васильева, К. Тарасова юлташсем ĕç нормине тăтăшах 200—225 процент тултарса пыраççĕ.

Артель 1943-мĕш çулăн пĕрремĕш кварталĕнче райсоюза 14 тонна вĕрен, 2.000 ашăк, турта пăявĕсем 17.700 мăшăр, хăмăт пăявĕ 1.500 штука, хăмăт кĕççисем 500, чĕлпĕрурхалăхсем 8.000 штука хатĕрлесе пама пулнă. Асăннă япаласенчен чылайĕшне райсоюза панă та ĕнтĕ. Кăçал райсоюза куллен кирлĕ таварсем пĕтĕмпе 213.500 тенкĕлĕх панă.

Чăваштарпромсоюз пирĕн артеле 1943 çулта 124.300 тенкĕлĕх тавар кăларма план пачĕ. Артель членĕсем çав плана январьпе февраль уйăхĕсенчех тултарассишĕн кĕрешрĕç.

Чăваш АССР Совнаркомĕ январь уйăхĕнче пирĕн артеле 5.000 тенкĕ укçа парса премилерĕ. Ĕçе çакнашкал хаклани артельре ĕçлекенсене татах тухăçлăнрах ĕçлеме хавхалантарчĕ. Артельре халь Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту сарăлса пырать. Эпир ăмăртура мала тухассишĕн, Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илессишĕн кĕрешетпĕр.

Г. Ерисов,
«Стрела» артель председателĕн заместителĕ.

СТАЛИН юлташ хушнă пек ĕçлĕпĕр

Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ февралĕн 23-мĕшĕнче панă приказа вуласа ăнлантарнă хыççăн Шăхасан районĕнчи «Березовка» колхоз членĕсем çуракине хатĕрленес ĕçе вăйлатрĕç. Çуракине кĕске срокра тата лайăх туса ирттерес тĕлĕшпе бригадăсем ăмăртăва тухрĕç. Кашни колхозник халь куллен çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе хĕрӳллĕн ĕçлет.

Приказа итленĕ хыççăн, пухура колхозниксен шухăш-кăмăлне вата колхозник С. Лаврентьев каласа пачĕ. Лаврентьев колхозникĕн икĕ ывăлĕ фашистсене хирĕç çапăçаççĕ.

—Юратнă полководец Сталин юлташ хушнă пек ĕçлĕпĕр. Çуракине эпир лайăх туса ирттерĕпĕр. Хăвăрт тата лайăх вăрлăхсем акăпăр. Хĕрлĕ Çар валли, çĕршыв валли нумай тырпул туса илĕпĕр. Лаша кӳлмелли хăмăт-пăявĕсене хатĕрлес ĕçе эпĕ хам çине илетĕп. Кашни лаша валли çуракинче ĕçлеме хăмăтсемпе ĕнерчĕксем юсавлă пулĕç, — терĕ пухура С. Лаврентьев юлташ.

П. Васильев.

Нимĕçсен фашистла çынçиенĕсем Дон çинчи Ростовра тунă тискер ĕçсем

Кунта эпир нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Дон çинчи Ростовра çав тери тискер ĕçсем туни çинчен калакан акта тата фотодокументсене пичетлетпĕр.

«АКТ

Эпир, аяларах алă пуснăскерсем, çак акта çакăн пирки çыртăмăр: Ростова йышăнса илнĕ хыççăн хулари нимĕç коменданчĕ генерал-майор Китель хулари мирлĕ çынсене массăллăн вĕлерессине организацилерĕ. Нумай çĕршер гражданăн, виçшер кунлăх апат-çимĕç тата хаклă япаласене илсе хăйсен ачисемпе пĕрле сборнăй пунктсене пымалла пулнă. Сборнăй пунктсене пынисене вара грузовиксем çине лартса хула хыçне илсе кайнă. Ботанически садпа зоопарк районĕнче çитĕннисене перкe вĕлернĕ, ачасен пуçĕсене хаяр имçам сĕрсе вĕлернĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, нимĕç палачĕсем 15—18 пин çынна çапла вĕлернĕ. Персе вĕлернисен хушшинче: 2-мĕш совет больницинчи куçчир отделенийĕн заведующийĕ доцент Киршман, врач-терапевт Имал, юрист Луцкий, Ворошилов ячĕпе хисепленекен завод директорĕн заместителĕ Буянков тата унăн арăмĕ, доцент Новиков тата унăн 70 çулхи амăшĕ, арăмĕ, 8 çулхи ывăлĕ, доктор Шершевская, медсестра Симанович, токарь Павловская тата ыттисем те.

Оккупаци вăхăтĕнче, пуринчен ытла хуларан тухса каяс умĕн нимĕç варварĕсем Ростов хулинчи промышленность предприятийĕсене нумайĕшне çаратнă, сирпĕнтерсе янă тата çунтарса янă. Сталин ячĕпе хисепленекен Ростсельмаш заводне, «Красный Аксай» завода, Ленин ячĕпе хисепленекен паровозсем юсакан завода, «Хĕрлĕ Çăлтăр» колбаса фабрикине, «Смычка» консерва заводне, Воровский ячĕпе хисепленекен чугун шăратакан завода, 2-мĕш номерлĕ çăнăхпа макарон комбинатне, Ворошилов ячĕпе хисепленекен механически завода, пĕтĕм çĕршывĕпе чи пысăк механизированнăй çăкăр заводне, Ростоври электротеплоцентрале, автобус паркне, трамвай паркне, пĕтĕм хулари троллейбуспа трамвай сетьне, почтăпа телеграфа, типографисене, водопроводпа канализацие, киномеханика мастерскойне, тĕрлĕ апат-çимĕç фабрикисемпе комбиначĕсене тата ытти чултăра предприятисемпе сооруженисене аркатса тăкнă.

Нимĕç варварĕсем облаçри государство библиотекинчи 2 миллион ытла кĕнекене çунтарса янă тата 25 библиотекăна аркатса тăкнă. Пит хаклă кĕнекесене, наука тĕлĕшпе çав тери пахаскерсене, пĕтерсе тăкнă е Германие илсе кайнă. Оккупантсем хулари центральнăй больницăн тĕп корпусĕсене, 1-мĕш, 3-мĕш тата 4-мĕш поликлиникăсене, железнодорожниксен поликлиникине тата ыттисене те аркатнă. Хăшпĕр больницăсене вĕсенче пулнă чирлĕ çынсемпе пĕрлех пĕтерсе тăкнă. Фашистла мародерсем больницăсенчен питĕ хаклă медицина аппаратурине тата инструментсене Германие илсе кайнă.

Варварсем хулари чи лайăх общественлă çуртсене аркатса тăкнă, çунтарса янă: Советсен çуртне, «Интурист» тата «Интернационал» гостиницăсене, Горький ячĕпе хисепленекен драма театрне, эстрада театрне, çамрăксен театрне, музыкăллă комеди театрне, «Гигант» тата «Хроника» кинотеатрсене, çутĕç çуртне, Сталин ячĕпе хисепленекен Ростсельмаш завочĕн культура дворецне, электриксен, медсантруд тата çыхăну работникĕсен профсоюзĕсен клубĕсене, чугунçул транспорчĕн инженер институтне, медицина институчĕн наукăпа тĕпчев лабораторийĕсемпе, клиникисене, педагогика институтне, Молотов ячĕпе хисепленекен университетăн физико-математически факультечĕн çуртне, çыхăну техникумне, строительство техникумне, музыка училищине, 50 ытла вăтам шкула, революци музейне, краеведени музейне, академиллĕ библиотекăна тата ыттисене те пĕтерсе тăкнă, çунтарса янă. Энгельс урамĕнчи пурăнмалли çуртсене пурне те (Вокзалтан пуçласа Ворошилов проспектне çити) сирпĕнтерсе çунтарса янă. Çавăн пекех Пушкин, Шаумян тата социализм урамĕсем тăрăх вокзалтан пуçласа Буденный проспектне çити тата Буденный, Театральнăй тата Ворошилов проспекчĕсем тăрăх, «Ростсельмаш» поселокĕнче, Олимпиадовкăра тата ытти вырăнсенче те нумай çуртсене сирпĕнтерсе, çунтарса янă. Горький ячĕпе хисепленекен парк Ростов çыннисен савăнăçĕ пулнă. Нимĕç варварĕсем паркра чи хаклă йывăççисене касса пĕтернĕ, фонтансемпе павильонсене аркатса тăкнă.

Обществăллă тата пурăнакан çуртсене çакăн пек аркатнă: вут тĕртекен саперсемпе подрывниксен уйрăм командисем минăсем хурса тухнă, çуртсене сирпĕнтерсе янă, çурт юлашкийĕсене бензин сапса çунтарнă. Бандитсем çакăн çинчен çуртра пурăнакансене пĕлтерме те шутламан. Ишĕлсе аннă çуртсен айĕнче темиçе çĕр çын вилнĕ.

Персе вĕлерессипе хăратса, гитлеровецсем Ростоври нумай çынсене Германие каторгăна янă. Комендант хушнă тăрăх, 14 çултан пуçласа 60 çула çитнĕ пур арçынсене те, 15 çултан пуçласа 50 çула çитнĕ пур хĕрарăмсене те çырса тухнă. Вĕсен паспорчĕсене тытса илнĕ. Çырнă çынсене вара сборнăй пунктсене пухнă. Персе вĕлерессипе хăратса, вĕсене вагонсем çине лартнă та вылăха ăсатнă пек хĕвеланăçнелле ăсатнă. Нумай пин совет çыннине çакăн пек Германие ăсатнă. Хулара юлнă çынсен вырăнăпа тата чирлесе вилмелле пулнă.

Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнипе чакса пыракан нимĕç оккупанчĕсем хулари тĕрмере 135 çынна вĕлернĕ. Вĕлерес умĕн палачсем вĕсене çав тери тискеррĕн асаплантарнă — сăмсисене каснă, куçĕсене шăтарса кăларнă, алли-урисене татса илнĕ. Çавăн хыççăн вара гитлеровецсем тĕрме çуртне унта лартнă совет гражданĕсемпе пĕрле сирпĕнтерсе янă. Тĕрме килкартинче 1.504 виле тупнă. Вĕсен хушшинче 122 хĕрарăм тата 57 ача вилли пулнă. Тĕрмере асаплантарса е персе вĕлернисем хушшинче Георгий Жданов инженерăн, Анна Михайлова работницăн тата ыттисен виллисене палласа илнĕ.

Мирлĕ совет гражданĕсен юнĕпе варланнă Ростов урамĕсемпе площадĕсем нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсен çав тери тискер ĕçĕсем çинчен каласа параççĕ.

Совет халăхне, пирĕн культурăна, вырăс тунă япалана çав тери тискеррĕн курайманнипе, гитлеровецсем хулара нумай çулсем хушшинче вырăс халăхĕ мĕн тунине тата 25 çул хушшинче совет çыннисем мĕн тунине пĕтĕмпех аркатса пĕтернĕ. Вăл аркатусене вăрçă валли кирлĕ пулнă тесе каласа ĕнентерме çук.

Пирĕн тăвансен юнĕ тăшмана тавăрма ыйтать. Дон çинчи Ростовăн пĕтĕм гражданĕсен ячĕпе эпир çав бандитсен тискер хăрушла ĕçĕсемшĕн хаяррăн ответ тыттарма ыйтатпăр». Акт çине çаксем алă пуснă: Ĕçхалăх депутачĕсен Горсовет Исполкомĕн председателĕн ĕçĕсене тăваканĕ С. Бурменский, «Заря» сăра завочĕн инженерĕ Звензек, профессор Н. Стасевич, профессор В. Карницкий, майор Я. Донской, майор П. Седов, капитан А. Токарь, «Метиз» артелĕн рабочийĕ А. Дубров, «Новый Городок» поселокăн уполномоченнăйĕ А. Макеева, Лензавод мастерĕ В. Бочаров, Микоян ячĕпе хисепленекен фабрика техникĕ С. Токарев.

* * *

Дон çинчи Ростовра нимĕçсем тунă юнлă тискер ĕçсем вĕсем гитлеровецсен совет халăхне вĕлерсе пĕтермелли, вăхăтлăха тытса илнĕ районсенчи пурлăх тата культура пуянлăхĕсене пĕтерсе тăкмалли çав тери тискер программăн пысăк мар пайĕ кăна пулать-ха. Хăйсем йышăнса илнĕ совет хулисемпе ялĕсене нимĕçсем пурне те аркатаççĕ, Совет Союзĕнчи халăхсен культурăпа истори енчен хаклă япалисене çаратаççĕ е пĕтерсе тăкаççĕ. Гитлеровецсем мирлĕ пурăнакан халăха асаплантараççĕ, персе е çакса вĕлереççĕ. Хӳтлĕхсĕр юлнă хĕрарăмсемпе ачасене вĕлерессе умĕнче те чарăнса тăмаççĕ. Вĕсем совет гражданĕсене вăйпах каторгăна Германие илсе каяççĕ. Вĕсене концлагерьсене хупаççĕ, выçăпа, хĕненипе е халран тухаччен ĕçлеттернипе вилмелле туса хураççĕ.

Çӳлте пичетленĕ акт нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем хăйсем тытса илнĕ çĕршывсемпе облаçсенче туса хуракан «çĕнĕ йĕрке» мĕнле йĕрке иккенне уççăн кăтартса парать. Гитлерла салтакăн ури ăçта ярса пуснă, çавăнта кирек епле культурăллă пурнăç та чарăнса ларать, тискерлĕхпе юхăну пуçланса каять.

Пирĕн çĕршыва тапăнса кĕнĕ нимĕç ирсĕрĕсем, совет çĕршывне юнпа тултарнăскерсем, пуриншĕн те— айăпсăр çынсем асапланнишĕн, хĕрарăмсемпе ачасене вĕлернишĕн, пусмăрла ĕçсем тунишĕн, вăрă-хурахла ĕçсемшĕн, аркатнишĕн ответ тытĕç. Тавăрас сехет инçе мар!

СОВИНФОРМБЮРО.

(Фотодокументсене Центральный хаçатсенче пичетлесе кăларнă).

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

ПРОМЫСЛА КООПЕРАЦИ АРТЕЛĔСЕН СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТĂВĔН ИТОГĔСЕМ

Чăваш АССР Совнаркомĕ республикăри промысла кооперации артелĕсен 1943 çулхи февраль уйăхĕнчи социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене пăхса тухнă:

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Парижская Коммуна» артель февраль уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци кăларас енĕпе 211,3 процент, куллен кирлĕ таварсем кăларас енĕпе 220,4 процент тултарнă, продукци туса кăларассине, январь уйăхĕнчипе танлаштарсан, 103,2 процент ӳстернĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Астакассинчи артельрен илсе «Парижская Коммуна» артеле (правлени председателĕ Калмыкова, райсовет исполкомĕн председателĕ Маклашкин, унăн вырăнти промышленность енĕпе ĕçлекен заместителĕ Соколов юлташсем) пама йышăннă тата артеле ĕçре уйрăмах палăрнă работниксене премилеме 10.000 тенкĕ премии памалла тунă.

Караньялĕнчи «Труд» артеле (райсовет исполкомĕн председателĕ Петров, правлени председателĕ Мокеев юлташсем) февраль уйăхĕнче ĕçре уйрăмах палăрнă работниксене премилеме 10.000 тенкĕ премии пама йышăннă.

Çĕрпӳ районĕнчи Упакассинчи артеле (правлени председателĕ Тимофеев) ĕçре уйрăмах палăрнă работниксене премилеме 5.000 тенкĕ укçа памалла тунă.

Шупашкарти «Пекарь» артеле (правлени председателĕ Мурышкин юлташ) ĕçре уйрăмах палăрнă работниксене премилеме 5.000 тенкĕ премии пама йышăннă.

Совнарком февраль уйăхĕнче Чăвашпромсоюз енĕпе Элĕк районĕнчи «Самолет», Канашри «Авангард», Кувакино районĕнчи «19 лет Октября», Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Труд», Сĕнтĕр районĕнчи «Волга», Чкаловски районри Чапаев ячĕпе тăракан, Шăхасан районĕнчи «Сталь», Елчĕк районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан, Тăвай районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан артельсем лайăх ĕçленине; Чăвашшвейпромсоюз енĕпе Етĕрне районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан, Сĕнтĕр районĕнчи «Тĕрлекен» тата Комсомольски районри Чайковский ячĕпе тăракан артельсем лайăх ĕçленине; Чăвашдревпромсоюз енĕпе Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Астакассинчи, Сĕнтĕр районĕнчи Янăмри, Етĕрне районĕнчи «Красный Яр», Пăрачкав районĕнчи Кожевинăри, Çĕмĕрле районĕнчи Улхашри, Сĕнтĕр районĕнчи Çармăскассинчи артельсем лайăх ĕçленине; Чăваштарпромсоюз енĕпе Красноармейски районри Энĕшкассинчи тата Октябрьски районри Пукашри артельсем лайăх ĕçленине палла тунă.

Совнарком кунпа пĕрлех Йĕпреç районĕнчи «Красный строитель» тата Кĕçĕн Чурашри артельсем, Ишлей районĕнчи Атăл ялĕнчи, Мамăшри, Ишекри, Тăрăнри, Шуркассинчи, Шетмĕпуçĕнчи, Шăйкильдинори тата Ыхракассинчи артельсем, Канаш районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан тата Янкăлчри артельсем, Çĕрпӳ районĕнчи «Перламутр» тата Туçири артельсем, Шупашкар районĕнчи Альгешри «Паха тĕрĕ» тата Чăрăшкассинчи артельсем пачах та начар ĕçленине палăртнă.

Совнарком Йĕпреç, Ишлей, Канаш, Çĕрпӳ, Шупашкар райсовечĕсен исполкомĕсен председателĕсене Алексеев, Херсонов, Ярандайкин, Хабаров тата Миронов юлташсене унти артельсене март уйăхĕнчи тата 1943 çулхи пĕрремĕш кварталти плана пурнăçа кĕртмелле тăвас тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнма хушнă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 12-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Мартăн 12-мĕшĕнче Хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем татăклăн штурмланă хыççăн Вязьма хулине чугунçул узелне йышăнса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех çапăçса пынă.

* * *

Мартăн 11-мĕшĕнче фронтăн чĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен войскăсемпе груз сем тиенĕ 150 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, полевой тата зенитнăй артиллерин 10 батарейине пусарнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă тата тăшманăн чугунçул эшелонне аркатса тăкнă.

* * *

Пирĕн войскăсем малалла тапăнса пырса, Вязьма хулипе чугунçул узелне йышăнса илнĕ. Хулашăн пынă çапăçусенче пирĕн войскăсем тăшмантан 8 самолет, 83 танк, 69 оруди, 222 пулемет, 565 автомашинăпа трактор, 57 паровоз, 515 вагон, нумай снарядсем, патронсем тата ытти çар хатĕрĕсем тытса илнĕ. Вилнисене кăна шута илсен те, тăшманăн 9.000 салтакпа офицертен кая мар пĕтнĕ.

* * *

Сычевкăран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем çапăçса пырса малалла куçнă. Халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Пĕр участокра Қазашвили тата Куприянов юлташсем ертсе пыракан подразделенисем тăшман оборонине çĕмĕрсе флангсенчен пырса çапнă та нимĕçсене васкасах каялла чакарнă. Гитлеровецсем çар техники нумай пăрахса хăварнă, вăл шутра тĕрлĕ калибрлă 12 оруди пур.

Темкиноран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем тăшман хирĕç тăнине сирсе пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта, çав шутра Знаменка ятлă район центрне, йышăнса илнĕ.

* * *

Белый хулинчен кăнтăртарахра пирĕн войскăсем малалла тапăнса пырса халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Н-ски чаçăн боецĕсем тăшмана хăваласа пырса халăх пурăнакан пысăк пункта йышăнса илнĕ. Унта нимĕçсен 18 танкне, 3 танкĕткине тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Харьковран кăнтăртарахра пирĕн войскăсем тăшманăн пехотипе танкĕсен йышлă вăйĕсене хирĕç хаяррăн çапăçнă. Н-ски соединени чаçĕсем гитлеровецсен умлă-хыçлăн тунă 8 атакине сирсе пăрахнă, 23 танк пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен 800 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ. Харьковран хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем нимĕçсен йышлăрах вăйĕсемпе хаяррăн çапăçнă хыççăн халăх пурăнакан пĕр пункта хăварнă, оборонăн çĕнĕ рубежĕ çине куçнă. Сывлăшри çапăçусенче пĕр кун хушшинче пирĕн авиаци нимĕçсен 26 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Изюм районĕнче тăшман пехотин пĕр полкĕ 40 танк пулăшса пирĕн позицисене атакăланă. Н-ски чаçăн боецĕсем гитлеровецсен атакисене сирсе 11 танкне, 8 транспортне тата нимĕçсен 300 салтакне офицерне çити вĕлерсе тăкнă. Тепĕр участокра старши лейтенант Миронов ертсе пыракан подразделенисем позицине нимĕçсен 20 танкне тата пĕр батальон пехотине тапăннă. Совет боецĕсем нимĕçсен 7 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Гитлеровецсем пĕр ротине çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Пирĕн штурмовиксем тăшманăн Орел хулинчи аэродромĕ çине вĕçсе пырса тапăннă. Бомбăсем пăрахса тата тупăсемпе пулеметсенчен персе нимĕçсен 15 самолетне пĕтерсе тăкнă, 20 самолетне çити сиенленĕ.

* * *

Житомир облаçĕнчи районсенче пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ тăшман гарнизонĕсене темиçе хутчен пыра-пыра тапăннă. Партизансем халăх пурăнакан пунктсене сасартăк вăркăнса кĕрсе, гитлеровецсене вĕлере-вĕлере пĕтернĕ. Совет патриочĕсем 8 танк, салтаксем ларнă 11 автомашина тата горючипе боеприпассен 2 складне пĕтерсе тăкнă. Пысăк чугунçул станцин хуçалăхне аркатса тăкнă. Халăхшăн тавăракансем тăшмантан 2 оруди, 3 батальоннăй миномет, 18 пулемет, 22.000 патрон тата ытти çар хатĕрĕсем те тытса илнĕ.

* * *

Итали пичечĕ юлашки вăхăтра Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра Итали войскисем кăтартнă паттăрлăх çинчен нумай çырма пуçларĕ. Вăл кампание Российăран тавăрăннă 8-мĕш армин салтакĕсемпе офицерĕсене чĕнсе каланă уйрăм приказ кăларса Муссолини хăй пуçласа янă. Анчах та Итали хаçачĕсемпе радиостанцийĕ Итали дивизийĕсем мĕнпе палăрнине уççăн каласа пама пултарайман. Фронтра хăйсем пулса курнă çынсем çакăн çинчен чăннине каласа пама пултараççĕ. Совет Информаци Бюровĕ «Кунеэнзе» ятлă Итали дивизин тыткăна лекнĕ начальникĕ капитан Рао Франческо тунă заявленине пичетлесе кăларнăччĕ. Вăл çапла каланăччĕ: «Итальянецсен армейски корпусĕ Российăра чăн-чăн катастрофа курчĕ.. Қаялла чакнă чухне Альпа полкĕсем йĕркесĕр ушкăнсем пек курăнчĕç. Салтаксемпе офицерсем çав тери хăраса каялла тарчĕç. Эпир пĕр чарăнмасăр 18-шар сехет утрăмăр, анчах та Хĕрлĕ Çар пире хупăрласа илнĕ ункăран тухма пултараймарăмăр. Çул çинче пирĕн автомашинăсене, хĕçпăшалпа апат-çимĕçе пăрахса хăвармалла пулчĕ. Ку питĕ хăрушă катастрофа пулса тăчĕ».

Тыткăна лекнĕ Итали капитанĕ Итали армине мĕнле аркатса тăкнине чылай тĕрĕс кăтартса панă. Чăннипе илсен, итальянецсен Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра пулнă дивизийĕсене пурне те пĕтерсе е аркатса тăкнă. Итальянецсен вуншар пин салтакĕпе офицерне вĕлернĕ, вуншар пин çынна тыткăна илнĕ. Итали дивизийĕсен командирĕсем генерал Паскалини Реганья тата Баттисти хăйсен штабĕсемпе пĕрле совет тыткăнĕнче пурăнаççĕ. Итальянецсен иккĕмĕш горно-стрелковăй дивизийĕнче, вилнисемпе тыткăна лекнисене шутласан, 10.000 çын пĕтнĕ, 3-мĕш горно-стрелковăй дивизире 10.700 çын, 4-мĕш горно-стрелковăй дивизире — 13.200 çын пĕтнĕ. Ытти дивизисем те çавăн пекех аркатнă пирки пĕтсе ларнă. Çап[illegible]

Вăрман хатĕрлевĕнче фронтри пек ĕçлемелли инкерлĕх

Планран ирттерсе 10.000 кубометр вутă хатĕрлесе парассишĕн кĕрешетпĕр

ВАРНАР, мартăн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). Пирĕн леспромхоз 1942 çулта чугунçул транспорчĕ валли планран ирттерсе 13.000 кубометр вутă хатĕрлесе панă. Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçе туйса тăрса, эпир кăçал та чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлессе турттарас ĕçе ăнăçлă туса пыма тытăнтăмăр. Мартăн 10-мĕшĕ тĕлне чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлемелли плана хатĕрлес енĕпе 103 процент, турттарас енĕпе 105 процент тултартăмăр. Вăрнар районĕ çак кун тĕлне вутă хатĕрлес плана 127 процент, турттарас енĕпе 117 процент пурнăçларĕ.

Чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлемелли плана Калинино районĕ те кĕçех пурнăçлать.

Вăрман хатĕрлевĕнче фронтри пек ĕçлемелли инкерлĕхре чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлесе турттарас ĕç татах та вăйланчĕ.

ВКП(б) Вăрнар райкомĕн секретарĕ Багров, ВКП(б) Калинино райкомĕн секретарĕ Романов юлташсем вăрман ĕçлекенĕсем хушшинче агитацилле-масăллă ĕçе аван организацилене. Вăрман хатĕрлес ĕçре Калинино районĕнчен П. Степанова, М. Ефимова, А. Иванова, М. Лебедева, П. Гордеева юлташсем лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем кулленех нормăна 125—150 процент тултараççĕ.

Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсем хавхалансă, вăрман касакансем чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес ĕçе шыв-шурлă çанталăк пуçланиччен туса пыма пулчĕç. Леспромхоз коллективĕ чугунçул транспорчĕ валли планран ирттерсе 10.000 кубометр вутă хатĕрлесе турттарассишĕн кĕрешет.

В. КУПЦОВ,
Леспромхоз директорĕн заместителĕ.

Пирĕн земляксем

Халăх ывăлĕсем*)

Чĕркуççи тарăнăш кăпка юр тăрăх хырăм çинче шуса, вырăнĕ-вырăнĕпе асăрханса утса, сержант Григорьев хăйĕн отрячĕпе тăшман оборони урлă каçать, нимĕçсен тылне тухать, вара çырмасем тăрăх, вăхăтран-вăхăта тайлăмсемпе сăртсем хушшинче пытанса, малалла—капитан кăтартса панă вырăн патнелле каять. Тул çутăлас умĕн боецсем икĕ мăн çул йÿпленсе каякан çĕре çитеççĕ те, юханшывăн сылтăм çыранĕ хĕррипе таçта çити тăсăлса каякан чăтлăх ăшне кĕрсе пытанаççĕ. Кунта отрядăн каç пуласса кĕтмелле.

Сăрт çамкинче пĕр-пĕрне хирехирĕç тăракан çуртсен тавралăхне сержант Григорьев хăйĕн куçĕсене вĕçертмесĕр тимлĕн сăнаса выртать. Унăн нимĕçсен часовойĕсем хăш вырăнта тăнине, вĕсене миçе сехетре улăштарнине тата гитлеровецсен хурал гарнизонĕ хăш çуртра вырнаçнине тĕплĕнрех пĕлмелле.

Хутор патĕнче тата кĕпер çинче тăракан часовойсем тавралăха тимсĕррĕн пăхкаласа утса çÿренĕ, вĕсем хăйсен умне хăрушлăх килесси çинчен асра та тытман. Мĕнле хăрушлăх пултăр-ха кунта—тылра? Вĕт, лере, кунтан сакăр çухрăм инçетре, çĕр ăшне чавăнса выртнă чăссем вĕсене хÿтĕлеççĕ. Юлашки вăхăтра нимĕçсене партизансем те хускатман.

Уйра çĕр çинчи мĕнпур юра çилтăман çавăрать, вăл шăхăрса, тискеррĕн уласа уй тăрăх тустарса çÿрет. Кĕпер çинче нимĕç хăйĕн вăрăм мăйне кăркка пек хутлатнă, пуçне хулпуççисем хушшине туртса кĕртнĕ. Çире унăн—симĕс шинель, урара—пушмак, пуçра—пилотка урлă çыхнă тутăр. Аллисене çанăсем ăшне чиксе çерçи пек тĕпĕртетсе тăрать вăл пĕр вырăнта.

— Ташлатăн иккен, ташла, ташла,—тесе шăппăн кулаççĕ нимĕç çине пăхса выртакан боецсем.

Вăрмана кĕрсенех, йывăç тĕмĕсен хÿтлĕхĕнче ларса каннă чухне, боецсем малтанлăха хăйсене-хăйсем ăшăннă пек туйрĕç. Вăрманта хÿтĕ. Çапах та сивĕ çанталăк каярахпа пирĕн боецсене те самаях туйтарма тытăнать. Çул çинче пулнă чухне вĕриленнĕ тата тар нÿрлĕхĕпе çемçелнĕ ÿт-пÿ майĕпен сивĕнме пуçлать. Сивĕ сывлĕш тумтир витĕр кĕрсе, çурăм тăрăх чупса çÿренĕн, ÿте чĕпĕтсе ыраттарнăн сисĕнет. Ал-урасем хытăрах шăнаççĕ, майĕпен кÿтме пуçлаççĕ.

— Куççем умĕнче çутă йăлтăрка пĕрчисем вылянса тăриччен мекĕрленĕр,—терĕ Григорьев боецсене,—вара юн ÿт тăрăх хăвăртрах чупса çÿреме пуçлать. Пÿрнесене кÿтсе хытма ан парăр, пĕрмаях вылятăр, алла сăтăрса ăшăтăр,—хушать вăл.

Кун питех те ерипен малалла шăвать. Ăш-чик шăнса пăрланма пуçланăн туйăнать, ÿт-пÿ тытса чармалла мар чĕтрет, шăлсем ыратиччен пĕр-пĕринпе шаккаççĕ. Анчах боецсем чăтаççĕ, вĕсем хускалмасăр, çак вăрманта хăйсем пуррипе çуккине пăлăртмасăр, выртаççĕ. Григорьев ирĕк панипе боецсем пĕрерĕн çурăм çине выртса вырăнтан вырăна куçаççĕ, е юнашар выртса, пĕр-пĕрне аллăран-ал тытса, ал вĕççĕн кĕрешеççĕ, пĕр-пĕрин урисем çине ларса, пĕчĕк ачасем пек кимĕлле ишеççĕ, çапла вара шăнса кÿтсе каясран сыхланаççĕ.

Григорьев, хăйĕн шăмшакĕ шăнса хытма пуçланă пулин те, вырăнтан тапранмасть. Унăн ăс-тăнĕ харсăррăн ĕçлет, пуçра вĕресе тăракан шухăш ăна хавхалантарать, вăл хăйне хăй ăшăннă пек пулать. Вăл хутор тăрăх час-часах чупкаласа çÿрекен нимĕçсен кашни утăмне тимлĕн сăнать, противник оборонин системине тишкĕрет, нимĕçсем хăйсен огневой точкисене хăш вырăна вырнаçтарса тухнине тĕпчет. Уншăн паллă: хутор хыçĕнчи пĕчĕк садра зенитнăй пулемет ларнă; унтан инçе мар, айлăмра, кĕпçипе кĕпер çинелле пăхса танксене хирĕç пемелли тупă тăнă; хутор варринчи çурт патĕнче минометсем пулма пултарнă. Часовойсем улшăннине сăнанипе, Григорьев часовойсене миçе сехетрен улăштарнине лайăх пĕлнĕ. Нимĕçсем пÿртрен тула тухса, окопсене юртан тасатнине курнă Григорьев, вĕсем миçен пулнине, çавна май гарнизон хисепне чуххăм шутласа пĕлнĕ.

— Вăйсем пĕр пекрех пирĕн,—терĕ вăл хăй патне чĕнсе илнĕ Корольковпа Иванова. Эсĕ хăвăн отделенипе хутор çине ав çав тупă патĕнчен тапăн,—хушрĕ вăл Королькова,—вара пĕрремĕш çурта çавăрса ил. Санăн, Иванов, хăвăн отделенипе сылтăмран, лупас енчен пырса, иккĕмĕш пÿрте хупăрласа илмелле. Эпĕ ытти боецсемпе хутор ку енчи пÿрт çине тапăнатăп. Ман шутпа кунта гарнизон штабĕ вырнаçнă пулас. Астăвăр, чуринчен малтан часовойсене катертес пулать, вĕсене сас партармалла мар. Унсăррăн нимĕçсем вăхăтсăр тревога çĕклеме пултараççĕ. Пÿртри нимĕçсем тытăçса ÿксен, пăшалран пересрен май килнĕ таран сыхланăр: пирĕн енчен те, нимĕçсен енчен те пăшалран пени пачăх та пулмасан питĕ аван. Гитлеровецсене штыкпа чиксе, пăвса е пуçран çапа-çапа вĕлерсе тухма тăрăшăр.

Çапла Григорьев, пулас операцин планне пур енчен те шухăшласа виçнĕскер, хăйĕн тĕллевне Корольковпа Иванова тĕплĕн каласа парĕ, унтан вĕсен шухăшне ыйтса пĕлчĕ. Вăл пурне те шута илчĕ. Нимĕçсен гарнизонне пĕтерсе тухсан, камăн мĕн тумалли, оборонăна тата огневой точкăсене мĕнле йĕркелесе тухмалли пуриншĕн те паллă пулчĕ.

Кĕтнĕ вăхăт çывхарчĕ. Шăп çурçĕр çитсен отряд вырăнтан тапранчĕ. Шап-шурă маскхалатсемпе пĕркеннĕ боецсем, асăрханса, малалла, хутор патнелле, ерипен ÿпеленесçĕ. Пăч тĕттĕм каç тăрать: пĕтĕм тавралăх шавлăн кĕрлесе улать; уйхирте кăнтăрлахи пекех вăйлă çил-тăман тустарса çÿрет. Кĕрт тăрăх ÿпеленме кансĕр, сывлама та хĕн—хирĕç çил вĕрет, сивĕ сывлăш чыхăнтарса кăкăра пÿлет. Çанăсемпе çăматăсем ăшне юр кĕрсе тулать, самантлăха канма чарăнса тăрсан, ÿт-пÿ тавра кĕрт купаланать. Çанталăкăн усал ашкăнăвĕнчен сыхланса, уй варринче çухалса пĕччен тăрса юлас мар тесе, боецсем юнашар е пĕр-пĕрин урине туймалла хыçа-хыççăн ÿпеленсе малалла шăваççĕ. Кĕпер патне тухсан, Григорьевпа Иванов унти часовой çине сасартăк тапăнчĕç, пĕри нимĕçе пăвса ÿкерчĕ, тепри штыкпа чиксе вĕлерчĕ. Вара отряд хутор патнелле васкарĕ, хутора çавăрса илес шутпа виç енчен хупăрласа пычĕ. Боецсем лупас тата тупă патĕнчи часовойсене вĕлерсе тухрĕç. Унтан Григорьевăн отрячĕ хуторти пур пÿртсене те уйрăмăн-уйрăмăн хупăрласа илчĕ. Боецсем чÿречесемпе алăксем умĕнче автоматсемпе винтовкăсен кĕпçисене нимĕçсем еннелле тĕллесе тăраççĕ, гранатăсем те хатĕр вĕсен.

Пÿртсенче купăс вылянă сас, унтан ют юрă кĕвви илтĕнет.

Хутран-ситрен нимĕçсем ахăлтатса кулнă, харкашса кăшкăрнă, тĕпĕртетнĕ. Çав самантрах пÿртре такам—те хĕрарăм, те ача асаплăн йынăшнă, хурлăхлăн макăрнă е кассăн-кассăн пусăрăннă сасăпа кăшкăрнă.

Григорьев, ун хыççăн ытти боецсем штыксемпе автоматсене умра тытса, пÿрте сирпĕнсе кĕреççĕ. Унта вĕсем çакна кураççĕ: алăк янаххи умĕнче çарамас хĕрарăм выртать, унăн икĕ кăкăрĕнчен тапса тухакан юн урай тăрăх юхать. Унтан урай варринче пĕр кровать урлă виçĕ хĕрарăма çыхса выртарнă, вĕсен ÿчĕсем умĕнче çарамасланнă ÿсĕр нимĕçсем тăраççĕ.

— Эх, чуниленсем!—тÿсеймесĕр кăшкăрса ярать Григорьев. Çав вăхăтрах унăн автомата кĕпçерен чăмăртаса тытнă аллисем пĕтĕм кĕлеткери вăя пухса çывăхарахри нимĕç пуçĕ çине ÿкеççĕ. Нимĕçĕн тăваткăл пуçĕ икĕ пая уйăрăлать.

— Рус!—кăшкăрать хыпăнса ÿкнĕ тепĕр нимĕçĕ. Анчах пирĕн боецсем гитлеровецсене тăна кĕме памаççĕ. Кама мĕнпе çăмăлтарах тата майлăрах, вăл нимĕçе çавăнпа çапса вĕлерет. Ал çывăхĕнчи мĕнпур япала ĕçе кĕрет: шĕвĕр вĕçлĕ штыксем гитлеровецсен хура юнлă чĕрисене çура-çура витĕр тухаççĕ; сивĕч хурçă кинжалсем бандитсен усал сывлăшпа тулнă ÿпкисене касаççĕ; винтовкăсен аврисем тискер кайăксен ирсĕр те аскăнчăк шухăшлă пуçĕсене шăтара-шăтара, пуç мимийĕсене юхтарса кăлараççĕ.

Каçару çук нимĕçсене. Пирĕн боецсем Гитлерăн аскăнчăк çÿрисене пĕр хĕрхенÿсĕр, чĕрере тулса çитнĕ пĕтĕм çилĕпе тарăхăва çырлахтарас туйăмпа вĕлереççĕ.

Çур сехет хушшинче хуторти гарнизона пĕтерсе тăкаççĕ. Хĕрĕх икĕ салтак тата икĕ офицер йытă вилĕмĕпе вилеççĕ. Кĕпер тата хутор пирĕн алла лекет.

Анчах Григорьев пĕлет: хутора нимĕçсенчен туртса илни çурма ĕç кăна-ха. Тăшман, хăйĕн хуторти гарнизонне пĕтерсе тăкнине пĕлсен, отряд çине тапăнма пултарать. Умра чи ответлă тапхăр: тем пулсан та, пирĕн чăссем кунта киличчен отрядăн вырăнтан тапранмалла мар.

Отряд пулас çапăçăва кĕтсе илме хатĕрленет.

Капитан М. ЯКИМОВ.

*Юлашки. Пуçламĕшĕ 57-мĕш номерте.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн постановленине сÿтсе-яврăмăр

Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕн коллективĕ, трактористсемпе комбайнерсем тата мастерскойсенче ĕçлекен рабочисем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «МТС-сен тракторĕсене, комбайнĕсене тата ялхуçалăх машинисене 1943 çулхи уйхир еçенче ĕçлеме хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленине сÿтсе-яврăмăр. Мартăн 10-мĕшĕнче пулса иртнĕ пухура çак постановление сÿтсе-явса, МТС коллективĕ конкретнăй обязательствăсем илчĕ. Вăл партипе правительство йышăннă постановление ырларĕ, ăна кулленех пурнăçласа пыма пулчĕ.

Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕ паянхи куна 22 трактора ĕçлеме юрăхлă туса лартнă. МТС мастерскойĕнче юлашки трактора юсаççĕ. Ăна мартăн 15-мĕшĕнче юсаса çитермелле. Иртнĕ çулта тунă йăнăшсенчен асăрханса, пирĕн трактористсем тракторсене кăçал çирĕп юсарĕç, кашни бригада хăйĕн ялхуçалăх машинисене ĕçе тухма хатĕрлерĕ. Апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне тракторсене машинăсемпе тата ĕç вăйĕпе комплектласа çитеретпĕр, бригадăсем ĕçе тухма хатĕр пулаççĕ. Çавăн пекех апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне горючи тата сĕрмелли япаласем илсе çÿремелли тата ямалли инвентаре пĕтĕмĕшпех хатĕрлесе хуратпăр, будкăсем туса хатĕрлетпĕр. Çак вăхăт тĕлнех машинăсен часах пĕтсе пыракан тата çĕмĕрĕлме пултаракан пайĕсене запаслăх кирлĕ таран туса хатĕрлетпĕр.

Малта пыракан МТС-сен ĕçне ырласа, пирĕн трактористсемпе комбайнерсем те комбайнсене апрелĕн 15-мĕшĕ тĕлне йăлтах юсаса лартма пулчĕç. Ермолаев юлташ ертсе пыракан бригада комбайнсен моторĕсене юсаса пĕтерчĕ. 3-мĕш тата 4-мĕш номерлĕ бригадăсем те комбайнсен моторĕсене ыран-паянах юсаса пĕтереççĕ.

Партипе правительство постановленине сÿтсе-явнă пухурах МТС коллективĕ Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕ. Бригадăсем пĕр-пĕрне ăмăртса ĕçлеме чĕнчĕç. Иккĕмĕш номерлĕ бригадăри трактористсем тракторпа тумалли ĕçсен çулталăкри планне кăçал 150 процент тултарма, 15 лаша вăйлĕ кашни тракторпа 750 гектар çинчи ĕçе тума обязательство илчĕç. Комбайнерсем те ăмăртăва тухрĕç. Вĕсем кăçал комбайнсемпе тырă вырас плана 150 процент тултарассишĕн кĕрешме пулчĕç.

Г. Иванов,
МТС директорĕ.

ФИНАНС ПЛАННЕ 150 ПРОЦЕНТ ТУЛТАРМА ПУЛЧĔ

КАЛИНИНО. Юнтапа ялсовечĕ финанс планне кварталтан квартала ирттерсе тултарса пырать. Налог агенчĕ пулса кунта Варвара Миронова ĕçлет. Вăл хăйăн ĕçне пысăк ответлăхпа туса пырать. Укçа-тенкĕ пухас ĕçе агитацилле ăнлантарулла ĕçпе çыхăнтарать, актива анлăн хутшăнтарать. Çавна пула Юнтапа ялсовечĕ укçа-тенкĕ пухмалли 1943 çулăн 1-мĕш кварталĕнчи плана мартăн 10-мĕшĕнче тултарчĕ.

Налог агенчĕ В. Миронова юлташ, Май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, иккĕмĕш кварталти плана Майăн 1-мĕшĕ тĕлне 150 процент пурнăçлама обязательство илчĕ.

Г. Матвеев.

Ют çĕршывсенче

СТЕТТИНИУС СССР-а ВĂРÇĂ ХАТĔРĔСЕМ ТАРАТНИ ÇИНЧЕН

ВАШИНГТОН, мартăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем хĕçпăшала кивçен е тата арендăна парас закона пурнăçлас тĕлĕшпе ĕçлекен уполномоченнăй Стеттиниус заявленине пичетленĕ. Стеттениус çапла каланă: малтан пĕлтернĕ темиçе пин самолет, танк тата оруди илнисĕр пуçне, Пĕрлешÿллĕ Штатсенчен Совет Союзне çар промышленноçĕ валли чĕртавар нумай янă, совет фронтĕнче усă курма транспорт тата çыхăну ĕçĕнче кирлĕ оборудовани ярса панă. Февралĕн 1-мĕшĕччен СССР-а çакăн чухлĕ япала янă: 580 пин тонна хурçă, 46 пин тонна алюминий тата дюралюминий, 21.500 тонна цинк, 94 пин тонна пăхăр, латунь, никель, молибден, 50 пин тонна толуол тата тринитротолуол, 75 пин тонна вăрçă завочĕсем валли кирлĕ ытти химикалисем, 75 пин тонна хурçă рельссем, 17 пин тонна чугунçул оборудованийĕ тата 268 пин тонна нефтепродуктсем. Совет Союзне çавăн пекех çĕршер полевой телефон аппарачĕсем, çĕршер пин миля тăршшĕ телефон пралукĕсем ярса панă. Кунсăр пуçне, танксене шутламасăр, мотомеханизацилле тĕрлĕ транспорт 99 пин единица ярса панă, вăл шутра: 72.500 грузовик, 17.500 автомобиль (тĕрлĕ çĕрте çÿреме пултараканнисем), 7.700 мотоцикл, 1.300 çар тракторĕсем, çавăн пекех тата виçĕ миллион мăшăра яхăн атă тата подметкăсем валли 18 пин тонна сăран ярса панă.

ФРАНЦИРЕ ПАРТИЗАНЛА КĔРЕШУ ВĂЙЛАННИ

ЛОНДОН, мартăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Генерал де Голль патне Францири партизансен движенин главнăй штабĕн уйрăм пĕлтерĕвне янă. Унта çапла каланă: Салон — Сюр-Сон районĕнче (Сона тата Луара департаменчĕ) кĕрешекен партизансен отрячĕ Шаньи ятлă пысăк чугунçул станцийĕ çывăхĕнче, нимĕç войскисене хĕвелтухăçнелле илсе каякан поезда ÿпĕнтерсе янă. Крушени пулнă пирки 250 гитлеровец вилнĕ, темиçе çĕр çын аманнă. Юнашарти Кот-д-Ор департаменчĕнче кунсăр пуçне Франци партизанĕсем нимĕçсен тата тепĕр икĕ поездне ÿпĕнтерсе янă. Çар хатĕрĕсем тиенĕ пĕр поездне тĕппипех пĕтернĕ. Италие кăмрăк турттарса каякан тепĕр эшелонĕнче 22 вагон арканса кайнă. Çак ĕçсене тунă француз патриочĕсем пĕр çухату та тумасăрах тарса пытаннă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, 1942 çулхи декабрĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа 1943 çулхи январĕн 20-мĕшĕччен Францире партизансем 300 ытла уйрăм операцисем тунă.

БОЛГАРИРЕ ПОРАЖЕНИЛЛĔ ШУХĂШ-КĂМĂЛСЕМ ÿСНИ

СОФИЯ, мартăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Болгари пичечĕ палăртнă тăрăх, çĕршывра «пораженилле шухăш-кăмăлсем» анлăн сарăлса кайнă. «Днесс» хаçат Болгари халăхне виçĕ группăна уйăрать. Пĕрремĕш группăна, хаçат каланă тăрăх, «правительство политикипе интересленмен» çынсем кĕреççĕ. Иккĕмĕш группа çĕршывăн политикине «йăнăш» тесе шутлать. Виççĕмĕш группа, хаçат каланă тăрăх, «ăнланса, государствăна хирĕçле план тăрăх ĕçлесе пырать, государство тĕреклĕхне хавшатать». Çавăн пек çынсемпе пуринпе те хаçат пĕр шеллемесĕр кĕрешме чĕнет.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЗАВОДА ÇАКĂН ПЕК ĔÇЛЕКЕНСЕМ КИРЛĔ:

Метала сивĕлле ĕçлекен инженер-технологсем тата техник-технологсем, экономистсем, снабжени тата склад работникĕсем, табельщицăсем, нарядчицăсем тата секретарь-машинистка.

Çакăн пек квалификацилле рабочисем кирлĕ: токарьсем, револьверщиксем, фрезеровщиксем, строгальщиксем, шлифовальщиксем, автоматчиксем, волочильщиксем, термистсем, газогенераторщиксем, литейщиксем, сварщиксем, молотобоецсем, штамповщицăсем, прессовщиксем, модельщиксем, электромонтерсем, слаботочниксем, телефонисткăсем, браковщиксем, ещĕк тăвакансем, упаковщиксем, слесарь-инструментальщиксем, ремонт тăвакан слесарьсем, автослесарьсем, шоферсем, металл касакансем, жестянниксем, шорник-смазчиксем, малярсем, плотниксем, каменщиксем, штукатурсем, печниксем, кровельщиксем, истопниксем, дворниксем, подсобнăй рабочисем, уборщицăсем, прачкăсем, курьерсем, сторожсем, возчиксемпе грузчиксем (кусене общежити параççĕ).

Васкавлă ассенизаторсем кирлĕ (ĕçукçине килĕшнĕ тăрăх тÿлеççĕ тата общежити параççĕ).

Завода 14 çула çитнĕ ачасене ученик шучĕçе вĕренме илеççĕ. Вĕреннĕ хушăра учениксене 150—200 тенкĕ тÿлесе тăраççĕ, рабочисен норми тăрăх снабжени пулать.

Вахтерсем тата пожарнăй охранниксем кирлĕ (арçынсем те, хĕрарăмсем те кĕме пултараççĕ). Вĕсене общежити параççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар, К. Маркс урамĕ, 80, пропуск бюровĕ. 11 сехетрен пуçласа кăнтăрла иртсен 3 сехетчен ыйтса пĕлме пулать.

3—1

Çул тăвакан уйрăм машинăсемпе ĕçлеме тата трактористсен курсне вĕренме илеççĕ. Занятисем апрелĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ, вĕренессе пĕр уйăх таран вĕренмелле.

16 çултан кая мар çитĕннисене тата 4 çултан кая мар вĕреннисене илеççĕ. Вĕренекенсене уйăхне 150 тенкĕ стипенди, общежити параççĕ тата столовăй пулать.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар, Калинин урамĕ, 51, кадрсен пайĕ, 9 сехетрен пуçласа 18 сехетчен пĕлме пулать.

Çавăнтах тата старши экономист, главнăй бухгалтерсем тата бухгалтер-ревизорсем кирлĕ.

3—1.

Центроэлектромонтажăн 6-мĕш участокне бухгалтер кирлĕ. Ĕçукçи килĕшнĕ тăрăх. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар, Ленин урамĕ, 11. Телефон 2—71.
2—1.

Мартăн 9-мĕшĕнче Красноармейски районри „Смычка“ колхозăн лаша çухалнă: тĕсĕ кĕрен, кĕсре, 7 çулта, урисем пакăлчак таран тăваттăшĕ те шурă, çамки çинче шурă тăрăх, çÿллĕшĕ 136 см.

Тупакансене çÿлте кăтартнă адреспа пĕлтерме ыйтатпăр.

Правлени.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 306 Типография № 1, Управления полиграф... при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. б. 58. 42 п.